## Диктант сăн-сăпачĕ



2015 çултанпа диктантăн сăн-сăпачĕ пур. «Пĕтĕм чăваш диктанчĕ – 2022» акци сăн-сăпачĕ пулма «Чĕнтĕрлĕ чаршав – 2021» конкурсăн «Чи лайăх арçын ролĕ» номинаци çĕнтерӳçине **Евгений Урдюков** пултаруллă артиста çирĕплетнĕ.

Маларах диктант сăн-сăпачĕ пулма çак хастарсем тивĕçлĕ пулнăччĕ:

2015 çулта **– Алиса Чайникова (Ахахпи)**, "Чăваш пики - 2013" конкурс çĕнтерӳçи, паллă юрăçă;

2016 çулта **– Ольга Элиме**, шкултан медальпе вĕренсе тухнă, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ, "Тăван радио" редакторĕ;

2017 çулта - **Мария Самделова**, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн студентки, «Патăрьел чăваш пики – 2013» конкурс çĕнтерӳçи, «Регионсен чăваш пики – 2015», «Раççей чăваш пики – 2016» конкурссен финалистки, «Çулталăк моделĕ – 2016» титула çĕнсе илнĕ пике, Наци радиовĕн дикторĕ;

2018 çулта - **Александра Прокопьева**, культура эткерлĕхĕн, экологи тата пурнăç хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕсемпе иртнĕ Пĕтĕм Раççейри «ЮНЭКО» çамрăксен форумĕнче I степеньлĕ Диплома тата «Студентсен чи лайăх ăслăлăх ĕçĕ» медале тивĕçнĕ, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн студентки;

2019 çулта акци сăн-сăпачĕ пулма **Алексей Александров** («Сантăр Элтиярĕ») Чăваш наци радиовĕн редакторне çирĕплетнĕ. Мĕн ачаран чăваш халăхĕн эткерĕпе кăсăкланнă. Халĕ ăна Чăваш Ен наци радиовĕнче "Сантăр Элтиярĕ" ятпа пĕлеççĕ. Вăл "Эткер", "Ылтăнран хаклă", "Пĕр кăкран" тата "Кала-ха" кăларăмсен ярăмĕсене йĕркелесе пырать;

2020 çулта «Пĕтĕм чăваш диктанчĕ» акци сăн-сăпачĕ пулма И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн чăваш тата вырăс филологи факультечĕн 4-мĕш курс студенткине **Екатерина Силеровăна** çирĕплетнĕ;

2021 çулта акци сăн-сăпачĕ пулма Интернетри хутшăну тетелĕсенче чăвашла страницăсем йĕркелесе тытса пыракан **Константин Доброхотов** блогера шаннă.